Ухсай.Я. Ивановăн алçырăвĕсем пирки / Я. Ухсай // Чăваш коммуни. – 1940. – 8 юпа.

К. В. Иванов юбилейĕ умĕн

Ивановăн алçырăвĕсем пирки

«Чăваш Коммуни» хаçатăн кăçал сентябрĕн 22-мĕшĕнче тухнă номерĕнче Лем корреспондент, Константин Ивановăн çĕнĕрен тупăннă сăввисем пирки çырнă чух, вăхăтлă та тĕрĕс ыйту лартать: «Анчах никам та халаса пĕтерейместь: ăçтан илсе пичетленĕ вĕсене? Кунта пуринчен ытла Ухсай Яков калаcа кăтартмалла. Ăçтан вăл илнĕ вăл малтанхи хут 1937 çулта Елхӳре пичетлесе кăларнă чух çак сăввисене: «Сăпка юрри», «Ватă вăрман шухăшĕ», «Усал шăрăх», «Кĕркунне», «Шуйттан чури»?

Корреспондент ыйтăвĕ чăннипех те вырăнта тăрать. Чăваш халăхĕн пĕр гениллĕ ывăлĕ, мухтавлă поэчĕ çинчен пĕлмелле.

Эпĕ 1929 çулта Елхӳ хулинче инструктора вĕренмĕ чух чăвашсен педагогика училищинче, ун чух техникумăн, чăваш чĕлхипе литература кабинетĕнче К. В. Ивановăн пысăк алçыру кĕнекине тата нумай ӳкерчĕкĕсене тупрăм. Вĕсене тирпейлĕ усраман. Ун чух кӳрсе, поэт шăллĕ Квинтилиан хушнипе, Шупашкарти писательсен организацийне çырусем çыртăм, анчах нимĕнле ответ та кĕтсе илеймерĕм. Тепĕр çулах манăн Мускава кусма тӳр килчĕ, çав вăхăтра пирĕн хулинчи чăваш педагогика училищинех Белебей хулине куçса кайрĕ. Ивановăн алçырăвĕсемпе ӳкерчĕкĕсене 1930 çулти август уйăхĕнче Елхӳре çыхса кĕнекесенчен пĕри Шупашкара та илсе килмĕччĕ, анчах ун чухне чăваш писателĕсен организацийĕнче ларакан хăш-пĕр тăшмансем вĕсене илмерĕç. Халĕ вăл арĕç те алăсене сулчĕç. Чăваш литературине сиенле те пулсан пĕтерес текен шăпăнчăксем, паллах ĕнтĕ, ăна пуçласа яракан Константин Иванова пĕтĕм чунĕсенчен курайман, унăн пултарулăхне те, ятне те çĕрпе пĕр тан тăвасшăн пулнă.

1935 çулти çуркунне, Иванов вилнĕренпе 20 çул тулнинчен асăнса ирттернĕ чух, эпĕ поэтăн алçырăвĕсене ыйтса Белебейри чăвашсен педучилищине çырсан, ӳкерчĕкне копине кăна ярса пачĕç, унта çак произведенисем кĕнĕччĕ: «Выçă антранăскерсем», «Шуйттан чури» трагеди сыпăкĕсем, «Кĕркунне», «Сăпка юрри», «Усал шăрăх», «Ватă вăрман шухăшĕ» тата икĕ çырса пĕтермен сăвăсем. Эпĕ вĕсем тăрăх çавăн чухнех «К. В. Ивановăн пичетленмен произведенийĕсем пирки» ятлă пысăк статья çырнăччĕ, унтах çав произведенисен текстчĕсене кĕртнĕччĕ. Вăл статья малтан «Трактор» альманахра, кайран «Пĕр том», «Хĕрлĕ Урал» кĕнекесенче тата нумаях пулмасть 8-мĕш класс валли кăларнă чăваш литератури учебникĕнче пичетленчĕç. Анчах те ун чухне Ивановăн Белебей педучилищинче сыхланакан алçырăвĕнче мĕн пуррисем пурте пичетленмен, мĕншĕн тесен мана ярса панă копинче вĕсем пулман. Эпĕ вăл алçырăвĕн оригиналне 1929 çулта вулапă тăрăх астăватăп: унта Константин Ивановăн Пăртта йăхĕн историллĕ хроникине çырса шухăш тытнин планĕ тата хăй мĕн чухлĕ укçа пĕтеринисене çырса пынисем те пурччĕ. Вĕсем, укçа тавраш пирки çырнисем, поэт пултарулăхĕнчен уйăрăлса хуçалăх опне куçаççĕ пулсан та, пирĕншĕн чаклă фактсем пулса, поэт биографине тĕплĕнрех çырма пулăшатчĕç. Константин Иванов укçа-тенкĕ енчен хĕсĕкрех пурăннă пулас, кулленех миçе пус пĕтернине шутланă. Эп çавăнпа алçырура ертнĕ пĕтĕмпе 1907 çулăн юлашки уйăхĕсенче çырнă пулас, мĕншĕн тесен «Выçă антранăскерсем» ятлă сăвви вĕçĕнче «1907 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕ» текен дата пур. Сăмах май калаcа хăварас пулать, Иванов «Выçă антранисем» мар, «Выçă антранăскерсем» тесе çырнă. Вăл сăвă чи малтан «Чăваш поэзи антологинче» мар, «Трактор» альманахра пичетленнĕ.

1936 çулта эпĕ, Ивановăн «Пĕр «Том» ятлă кĕнекине кăларас умĕн, унăн пичетленмен сăввисем чăн-чăн хăй çырнă алçырăвĕсене тупас тесе юриех Белебейри чăвашсен педучилищине кайрăм, анчах унта вĕсене пĕтĕмпех сухатса пĕтерме ĕлкĕрнĕ. Çав вăхăтрах Константин Васильевичăн тăван йăмăкĕ Праски мана Ивановăн пичетленмен сăввисем пурри çинчен. вăл ăна пĕр чăваш писательне панă çинчен калаcа панăччĕ. Эпĕ ăна шырама тытăнтăм та чăнах та чăваш писателĕсен Союзĕн архивĕнче 1936 çулти кĕркунне тупрăм. Вĕсем К. В. Иванов хăй аллипе çырнисем мар, унăн шăллĕ Квинтилиан Иванов куçарса çырнă мĕн. Эпĕ хам валли çырса илтĕм, анчах шăллĕ çырнă оригиналĕ халĕ ăçта кайнине пĕлесшĕн çук пулать ĕнтĕ. Пирĕн чăваш совет писателĕсен Союзĕ писательсен алçырăвĕсене сыхлас пирки халиччен шухăша кайман-ха, анчах çухатас пирки тимлеме пăрахнă. Юлашкинчен тупнă сăвăсем çаксем: «Хальхи самана», «Шуйттан чури» трагедин пĕр сыпăкĕ, «Чĕкеç», Некрасовпа Кольцовран куçарнисем.

Халĕ Чăвашгиз кăларнă «Сочиненисем» кĕнекене пĕтĕмпех мĕн пуххи тĕрлентерчĕç, çĕнĕрех кĕртнĕ сăвăсем пирки комментарисем те çырнăччĕ анчах Чăвашгиз редакторĕсем манăн комментарисене кăларса пăрахнă. Редакторсем, комментарисемсĕр пуçне Ивановăн икĕ сăввине те аласа тăкма ĕлкĕрнĕ, — чăваш литератури чи паллă поэтне вакатма та хăйнă. Хăшпĕр хыпнă, — тесе ăçаль каламан, вĕсем те çаплах кĕнекене пăснă, çавăнпа поэтăн хăшпĕр çырса пĕтерейменскерсене çăлтасшăн. Чи малтанах «Шуйттан чури» трагедийне илĕпĕр. Ивановăн планĕнче ун пĕшне калаcа паракан вырăн пур. Иванов хăй аллипе çырнă планĕ çапла:

Пĕррĕмĕш пайĕ: Çеçен хир. Юман. Ун кутĕнчех пысăк чул выртать. Вăрçă. Пĕрлешсе иртсе каять. Амантнă чăваш. Икĕ юлташ. Укçа енчĕкĕ. Шуйттан: «Ил, ил укçине!» «Сывă пул» — эманнине вĕлерет. Савăнăç юрри. «Ӳкĕн!» — тенĕ сасă. Аксăр пулать Çил тухать. Аçа çапать. Шуйттанпа пирĕшти. Чаршав.

Иккĕмĕш пайĕ: Пирĕштисем шăтăк чавра. Усал çынна ылханаççĕ. Вăрçăра вилнисене пиллесе юрлаççĕ. Унтан вĕсен чунĕсене илеççĕ те каяççĕ. Пĕччен çын Шуйттан юрри, ахăлтатни. Асатмалли юрă. Тăпра ярса пусаççĕ. Аçа çапать, шуйттан ахăлтатать. Çынсем тарса пĕтеççĕ. Пирĕштисем аиса шăтăка тултарма тытăнаççĕ. Чаршав.

Виççĕмĕш пайĕ: Кивте. Пĕр çул иртсен. Пӳртре. Амăшĕпе ачи. Амăшĕн хуйхăллă юрри. Ашшĕ хуйхăллă килсе кĕрет. Пурте хăраççĕ! Шуйттан! Майракаллă. Майракаллă? Амăшне те, ачине те вĕлерет. Çӳлте аслати кĕрлет. Пирĕшти чӳрече витĕр: «Мĕскĕн этем». Пирĕшти юрри. Ку кĕтесре хĕсĕнсе ларнă. Пирĕшти. Тепĕр ачи килсе кĕрет. Шуйттан ăна та вĕлерет. Аçа çап: Чӳречерен кулса ирать те кунăна та чунне илсе каять. Чаршав.

Эпир трагеди виçĕ пайлă пулнине тата унта мĕн пулса иртессине пĕлетпĕр. Трагедин умĕнче çапла эпиграф:

> Пĕлĕт сапшăн тимĕр пулĕ,
> Тĕнче сапшăн тимĕк пулĕ,
> Сенĕн кĕлӳ тĕтĕм пулĕ.

Çаксене пурне те кĕнекерен кăларса пăрахнă мĕншĕн иккенне кăтартман. Иванов çырнисем вахăль тĕсахал юлнă, юлнисене те пулин вулакансене парасчĕ.

Иванов пĕтĕмпе 5 юмах çырма шухăшланă, вĕсенчен виççĕмĕшне кăна — «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» тата «Икĕ хĕр» çырнă. «Хуркайăксем» тата «Ватă вăрман шухăшĕ» ятлисем пирĕншĕн паллă мар. «Ватă вăрман шухăшĕ» юмаха ăнлантарса, Иванов вырăсла «Отрывок из легенды про чувашского царя» тесе çырнă, анчах кĕчекере çырма тытăннă юмах пуçлавĕшĕ çеç пулнине пĕлтерсе хăварман. Вăл юмахсем умĕн çакăн пек пролог пулнă:

> Кукашшĕне ытлесе
> Аврать ачи сах çинче,
> Хăйă çунать тишласа,
> Хура пӳрте çутатса,
> Ватти тăвать çăпата
> Хăй юмахне çаптарса,
> Юмах юман тăррипче,
> Халлам хапха туррипче.
> Тата тепĕр сăвă тапăкĕ пур:
> Килсе çитрĕ кĕркунне,
> Йывăç пахчи çаралать,
> Тикĕсе кайнă çулçисене
> Çил вĕçтерсе вылятать.

Кĕнекерен çаксене иккĕшне те кăлармă.

Пирĕн издательствăсенче ăçлекенсем хушшинче халĕ те писательсемпе поэтсен кĕнекисене сăлтавсăрах тӳрлетсе пăснисем пулаççĕ, çавăнпа Иванов та вĕсенчен пăрăнса иртеймен. Пĕр вăхăтра учебниксене Константин Ивановăн юптарувне тӳрлетни çинчен те [illegible] хаттарнăччĕ, юлашкинчен вĕсене [illegible] лов мучи геройĕсен шутĕнчен [illegible] вăхăт çитет те пулĕ ĕнтĕ.

«Чакă ялĕнчен куçса кайнипе» ятлă статьяра Л. Е. тесе алă пуснă [illegible] Иванов йăхĕ Пушкăрт çĕрĕнчен [illegible] тан куçса кайни çинчен [illegible] тать. Константин Ивановăн [illegible] ăвакĕсем 12-мĕш ĕмĕрте [illegible] шывĕнчен куçса килнĕ. Авалхи [illegible] чĕн тишкерме юратакан [illegible] ялĕнчи çынсем, уйрăмах «Сим колхозĕн часнĕ Ф. Иванов (Çĕнĕ [illegible] петĕр тесе чĕнеççĕ) калакă тăрă Иванов йăхне пуçласа яракан [illegible] тапа Иван Патăрьел тăвра [illegible] пӳрт ялĕнчен куçса килнĕ. Эпĕ [illegible] васса, кĕркунне чӳк ирттерекен [illegible] тăсем хăйсен кĕллисенче те Андрей [illegible] рашĕнчи çĕрсенчен вырткан тăвана асăнса, вĕсенчен çăмăллăх [illegible] чĕç. Ивановăн аслашшĕсемпе [illegible] сем ăçтан куçса килнине тата [illegible] Белебей хулинче пăлханнисене [illegible] тесен, архивсене пăхмалла тата [illegible] хи историксем çырнисене тишкермелле, Елизавета патша Белебей [illegible] сене хуса кăларасси çинчен уйăрса панă указа çыхăннă материала хушшинче хаклă документсем [illegible] пулатараççĕ. Ку тĕлĕшпе пирĕн [illegible] рисене ятарласа ăслене тытăнма тех те кирлĕччĕ, мĕншĕн тесен [illegible] вашсем, хăйсен çĕршывĕнчи [illegible] сене пусмăрсене тӳсеймесĕр, [illegible] пырса урăх вырăнсене тарни [illegible] раш халăхĕн историйĕнче [illegible] рăн йышăнса тăрать. Вĕсене [illegible] Иванов пултарулăхне вĕрентме [illegible] те кирлĕ, Унăн сăввисене [illegible] лăхĕн тĕлĕнмелле ĕмĕр хушши [illegible] пĕ куçкĕски çинчи пекех [illegible]

ЯКОВ УХСАЙ